15-мĕш çул тухать.

# КАПКĂН

№ 1. ЯНВАРЬ 1940 çул

„Чăваш Коммунĕ“ хаçат çумĕнче тухать




*Пĕтĕм образованнăй тĕнчен чи малти ретĕнче пуçпулса тăракан 1940 çулхи Российăна, наукăна та, искусствăна та закон парса тăракан пĕтĕм çутта тухнă этемлĕхĕн чун-чĕрери кăмăлĕпе хисепне илсе тăракан Российăна курма пӳрнĕ пирĕн ачасен ачисене тата вĕсен ачисене ăмсанатпăр.*

*В. Белинский.*

# Юлашки-тӗлешкисем

Вӗсен хуҫи хыҫран хӗтӗртнӗҫемӗн,
Вӗтӗ йышши шӑркаллӑ йытӑсем—
Мӗнпур Каяндер—Таннер—Маннергеймӗ
Ӳлесе ячӗҫ тӗттӗм кӗтесрен.
. . . Хаяр тӑшман, хӳри айне вут хунӑн,
Тарма пуҫларӗ пуҫсӑр нӑйкӑшса...

Арк. Ӗҫхӗл.

## I. Хулари хӑшпӗр картинӑсенчен пӗри

Тӗттӗм урамри хӑлтӑр-халтӑр тротуар тӑрӑх пӗр пӗчӗк офицер вӗтӗртетсе чупса пынӑ. Ӑна хирӗҫ тепӗр пысӑк офицер хашкаса лапӑстатнӑ. Хӗрсе кайнӑ моторлӑ машинӑсем пек вӗсем пӗрне-пӗри мӗнпур вӑйран пырса ҫапӑннӑ та иккӗшӗ икӗ еннелле ҫӗкленсе ӳкнӗ.

— Карау-у-у-улллл!—качака таки пек ҫухӑрса янӑ пӗчӗк офицер.—Нападени-и-и!

— Кара-а-ау-у-улллл!—упа ами пек мӗкӗрсе янӑ пысӑк офицер.—Нападен-и-и!

Унтан, пӗчӗк офицерӗ, сӑра курки пек мӑкӑрӑлса тухнӑ ҫамкине хыпаланӑ май, самантлӑха чӗнмесӗр выртнӑ хыҫҫӑн кабурӗнчен револьвер кӑларнӑ та:

— Кам эсӗ?—тенӗ.—Мӗнле сволочь! Кала? Коммунист-и? Руки вверх! Карау-у-ул!..

— Карау-у-ул!—мӗкӗрнӗ лешӗ, сухапуҫ тимри пек хайрӑлса чалӑшнӑ янахне хыпаласа.—Эсӗ ху коммунист пулӗ-ха... Офицер ҫине нападени тӑватӑн!.. Кай кунтан! Тар хӑвӑртрах! Перетӗп... Карау-у-ул!!!

Часах вӗсем пӗрне-пӗри палланӑ.

— Ӑҫта каятӑн?—ыйтнӑ пӗчӗкки.

— Газоубежищене таратӑп,—тенӗ пысӑкки.—Курмастӑним, хулана тӗттӗмлетрӗҫ? Сывлӑшран нападени пулать пулӗ ӗнтӗ...

— Уншӑн мар ӑна,—ӗнентернӗ пӗчӗкки.—Хуларан тухса тарма приказ панӑ. Электростанцине ҫӗмӗрнӗ. Тата мӗн ҫӗмӗрсе хӑвармалли ҫинчен уйрӑм указ пулать. Ҫав указсене пӗлме васкатӑп эп. Атя площаде. Унта пӗлтереҫҫӗ. Митинг пулать.

Ҫар ҫыннисемпе тулнӑ площаде ҫитнӗ вӗсем. Хӗрлӗ Ҫар чаҫӗсем ҫывхарни ҫинчен, хуларан халех тухса тармалли ҫинчен, мӗн ӗлкӗрнӗ таран хулана ҫӗмӗрсе хӑвармалли ҫинчен, мирлӗ халӑха та хӑйсемпе пӗрле илсе каймалли ҫинчен сӗлехе сирпӗтсех каланӑ оратор.

— Ӑҫталла каятпӑр?—ыйтнӑ салтаксенчен пӗри, хыҫалта тӑраканни.

— Аҫталла? Паллах, хӗвеланӑҫ еннелле...

— Э-э-э... Эп пӗлмен те... Хӗвеланӑҫ еннелле эппин, ӗнер анчах хӗвелтухӑҫнелле теттӗрччӗ-те... Апла капут сирӗн „Великая Финляндия!"

— Мӗн калаҫатӑн, йытӑ! Арестовать! Ҫакӑнпа митинг хупӑннӑ тесе шутлатӑп,—тенӗ оратор.

Салтаксем пӑлханнӑ. Митинг ҫӗнӗрен пуҫланнӑ.

## II. Ялти хӑшпӗр картинӑсенчен пӗри

Старик кӑмака хыҫӗнче, никам курмалла мар ҫӗрте пӑшлатса выртнӑ. Пӳрте пӗр ҫын кӑпӑртатса кӗнӗ. Вӗри мунчари пек хашӑлтатнӑ вӑл. Хыпаланнӑ. Теменле пралуксем каркаланӑ. Ҫунатне амантнӑ текерлӗк кайӑк пек тӑвӑр саслӑн шӑхӑра-шӑхӑра юрланӑ. Пӳрте тепри кӗрсе тӑнӑ.

— Ну, хӑвӑртрах!—тенӗ вӑл кӗнӗ-кӗменех.

— Есть, ваше сиятельство!—тенӗ ӑна шӑхӑраканни.

„Сиятельство" кӑштах, ирӗксӗррӗн тенӗ пек, кулса илнӗ. Кулса илнӗ те каланӑ:

— Ӗҫ аван пырать. Яла пӗр ҫурт та минӑланмасӑр юлмарӗ. Леш, магазинне те... Тӗрлӗ таварсем унта. Ӗҫме-ҫимесем. Яла ҫитсенех ҫавӑнта кӗпӗрленсе пыраҫҫӗ ӗнтӗ красноармеецсем. Пырса кӗччӗр... Ну, хатӗр-и санӑн?!—шӑртланса ахӑрнӑ вӑл.

— Хатӗр!

Ҫавӑнтах вӗсем чӳречерен тухса сикнӗ. Ял енелле урӑх ҫавӑрӑнса пӑхмасӑр тарнӑ.

Старик еррипенӗн кӑна кӑмака хыҫӗнчен йӑраланса тухнӑ. Ӑшӑрханипе чӑм шыва ӳкнӗ вӑл. Шӑм-шак ҫӑмӑлланнӑн туйӑннӑ. Алӑк хӑлӑпӗнчен теменле пралук кӑкарӑнса тӑнине сӑнанӑ. Вӑл ун патне пыман. Тин ҫеҫ офицерсем сиксе аннӑ чӳречерен хӗсӗнкелесе тухнӑ та магазин патнелле утнӑ.

Яла часах хӗрлисем ҫитсе кӗнӗ. Магазин умӗнчи старик вӗсене алӑ ҫӗклесе саламланӑ.

— Тархасшӑн ҫывӑха ан килӗр!—асӑрхаттарнӑ вӑл.—Ҫак магазинри япаласене ан тӗртӗнӗр.Темӗскер тунӑ унта. Хӑрушӑ япала туса хӑварнӑ.

— Тавтапуҫ, ӑслӑ сӑмахусемшӗн,—тенӗ командир. Ҫавӑнтах ӑна вӑл лайӑх йышши пирус кӑларса тыттарнӑ. Красноармеецсем тӗрлӗрен ӗҫмеҫиме сӗннӗ ӑна, ыйта-ыйта пӗлнӗ. Тӑван ывӑлӗсем пек калаҫнӑ.

—И-и-и!—тӗлӗннӗ старик.—Эсир капла мар тесе эп.

Красноармеецсене старик асӑрханусӑн ертсе ҫӳренӗ. Ҫурт хыҫҫӑн ҫурт минӑран тасалнӑ. Пасӑр пытанса юлнӑ хресченсем урамра куранкалама пуҫланӑ. Мӗскӗн старик пекех вӗсем, хӑйсен тӑшманӗсене чӗререн ылханнӑ, ҫӑлӑнӑҫ кӳрекен Хӗрлӗ Ҫар паттӑрӗсене тав тунӑ.

## III. Вӑрманти хӑшпӗр картинӑсенчен пӗри

Лапсӑркка йывӑҫ тӑрринче пӗр офицер—снайпер юмах ярса ларнӑ:

— Москальсем калама ҫук хӗрхенӳсӗр ҫынсем вӗсем,—тенӗ вӑл, юнашар йывӑҫ ҫинче сӗнксе ларакан салтак ҫине пӑхса.—Ҫынна асаплантарса вӗлерме юратаҫҫӗ, тет. Манӑн асаттене те ҫапла, ҫаппа-ҫарамаслантарнӑ та вӑрмана йывӑҫ ҫумне ҫыхса хӑварнӑ. Ҫуллахи вӑхӑтра вӗт: шӑна-пӑван, вӑрӑмтуна...

— Кам пулнӑ сан аслаҫу,—интересленнӗ салтак.

— Питӗ ырӑ ҫын пулнӑ... Помещик.

— Вилнӗ-и вара?

— Вилнĕ çав... Ун чухнех мар та, кайран... Аван старик. Ватă пулсан та питĕ йăрă çÿрет. Мана хăнана чĕнсе янă,—хăйĕн сăмах пуçламĕшне манса, хушса хунă офицер.

— Апла иккен,—тенĕ салтак.—Ну-и хырăм выçрĕ! Ыйхă та килет. Пăшал та перес килет. Час çитессĕ-ши вĕсем?

— Çитессĕ. Чшшш!—асăрхаттарнă офицер.—Командирне, малта пыраканнине чи малтан персе пăрахас пулать.

— Пĕлетĕп, —тенĕ салтак.

Танксем çĕр çĕмĕрсе иртнĕ. Акă, пехотă...

— Ну?—асăрхаттарнă офицер. Хăй те хатĕрленнĕ.

Крр-р-рĕссс! тутарнă салтак. Тăрр-р-рăсс! персе аннă офицер. Ун хыççăнах салтак та сиксе аннă.

— Манăн кайăк ку!—тенĕ вăл, офицер вилли çине кăтартнă май, кулса тăракан красноармеецсем çине савăнăçлăн пăхса.—Охотник ывăлĕ эпĕ. Кунашкал кайăксене персе антарма эп питĕ те ăста. Ку вăрманта сахал мар вĕсем. Илĕр мана хăвăрпала. Сире эп кирлĕ çын пулăп...

Вара вăл Хĕрлĕ Çар паттăрĕсемпе пĕрлех малалла, хăйсен халăхне çăтса яма хатĕрленнĕ çĕлен-калтасене тата вĕсен юлашки-тĕлешкисене çĕмĕрме мухтавлăн утнă.

Ăнăçуллă пултăр унăн çулĕ! **Митта Петĕрĕ.**

Капиталистсем вăрçă вăхăтĕнче кашни снаряд хăйсене мĕн чухлĕ тупăш парасси таранччен шутласа хунă. (ХАÇАТСЕНЧЕН).



— Çыр, тата тепĕр снаряд килсе хаплатрĕ. Кун тупăшĕпе эпир çĕнĕ çул касхине бал туса ирттерĕпĕр.

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

# Пурнăç пурăнма хушать

Этем миçе çулччен пурăнма пултарать? Çĕр çула çитме пултарать-и? 110 çула? 130 çула? 150 çула? Юлашки цифрăсене калană чухне вара эпир, нимĕнле пуплев-сăмах хушмасăрах ой-йой-ой тетпĕр.

Пирĕн ялти колхозник Хумка Михалчă та ку ыйтупа нумай интересленет. Халĕ 70 çулта вăл. Унпа чăн малтанхи хут паллашакан çынсем, унăн шуралма пуçламан сарă сухалне кура, вăл чăнах та 70 çултине ĕненесшĕн те мар. „Ой-йой-ой, сар сухал, совĕçе пĕлмесĕрех 20 çулне хушса хурать. Вата ятне, хисеплĕ асатте ятне срок çитмесĕрех илесшĕн пулас“, теççĕ. Сăн-пуç çамрăкла курăнни киревсĕр япала мар ĕнтĕ, Хумка Михалчă вара кăмăллăн кулса çеç ответлет: „Çамрăкланса пыратăп пулас, тăра киле ватăлатăп пулĕ, тата 10—12 çултан масар çине хамах утатăп“, тет.—Тен, çуран утиччен велосипедпа кайсан авантарах пулĕ,—теççĕ çамрăксем, старик сăмахне шӳт еннелле пăрса.

Лăх-лăх-лăх кулать Хумка Михалчă. Пĕлет вăл: 10—12 çул тени сăмах майĕпе çеç тухса каять.

Хумка Михалчă хăйĕн кĕске мар ĕмĕрĕнче ун пек сроксене сахал мар лартса курнă, вĕсене пăхсан унăн халиччен сахалтан та виçĕ хут вилсе выртмалла пулнă.

40 çул ытла ĕлĕкрех вăл чухăн ашшĕ килĕнчен, пĕр кашăк илеймесĕрех, çамрăк арăмне çавăтса тухнă та „çемье хуçи“ ятне илнĕ. Кашкăрла законлă саманара асаплăха хирĕç кĕрешсе мĕн чухлĕ хĕн курнине хăй те шутласа çитерейменн вăл, анчах писĕ чĕреллĕ хресчен хунав юман пекех çирĕп тăнă. Пĕкĕ пек авăннă вăл, хурланнă, нушана ылханнă, вара малтанхи хут: „Çын чухлĕ пуласчĕ те вара вилсен те юрать“, тенĕ. Анчах вилессе те вилмен, çын чухлĕ те пулайман. Арăмĕ вĕçрен вĕçе виçĕ хĕр çуратса панă, çемье пиллĕк çынна çитнĕ, анчах пĕр ят çĕрĕпе çеç пурăннă. „Эх, пĕр ывăлăм çеç пулинччĕ, вара вилсен те юрать“, тенĕ Хумка, йывăррăн сывласа. Чăн та, патвар арăмĕ виçĕ ывăл çуратса панă, анчах ял çĕрне тата 20 çултан çеç валеçмелле пулнă. Хумка тем пек авкаланнă, йышлă çемьене тăрантарасси, вилĕмрен виçĕ хут асапрах пулнă. „Çак ывăлсен ячĕпе çĕр илĕттĕм те, вара вилсен те юрать“, тенĕ вăл пĕрре, çемьипе шĕвĕ те çусăр шӳрпе сыпсах ларнă чухне.

Октябрь революцийĕ кĕрлесе каять, кашкăрла законлă самана тĕпĕ-йĕрĕпех ишĕлсе анать, совет халăхĕ, Ленинпа Сталин ертсе пынипе, çĕршыва тăшмансенчен тасатса, çĕнĕ те телейлĕ пурнăç тума тытăнать. Хумка Михалчăна пĕр харăс сакăр ятшăн çĕр касса панă. Кун хыççăн вăл хăйĕн сăмахĕсем çине корректурăллă тӳрлетӳсем хушса хума тытăннă: „Çак ачасене çын çине кăлариччен ӳстерсе çитерем те, вара вилсен те юрать“ тенĕ. Анчах социализмла пурăнăç йĕрки Хумка Михалчăна кунтан та урăхла çулпа илсе кайнă.

Икĕ аслă хĕрĕ качча тухса, хăйсен ачисене ӳстерме тытăннă. Виçĕ ывăлĕ тата кĕçĕн хĕрĕ, пĕрин хыççăн тепри, шкулсене вĕренме кайнă. Хумка Михалчăпа арăмне иккĕшне çеç киле юлма тивнĕ. Чăн малтанах унăн ывăлĕсене уйăрса кăларас хуйхă пĕтнĕ, вĕсем кашниех хăйсем валли специальностьсем суйласа илнĕ те, халăх хуçалăхĕн тĕрлĕ отраслисенче ĕçлеме тытăннă. Хĕрĕ медицина техникумне вĕренсе пĕтернĕ хыççăн пĕр инженера качча тухса, унпа пĕрлех Инçет Хĕвелтухăçне ĕçлеме кайнă.

10 çул каярах, çĕнĕ çул умĕн, Хумка Михалчă колхоза кĕнĕ, хăйĕн 60 çул пурăннă пурăнăç çулне пăрахса çĕнĕ пурнăç çулĕ çине тăни çинчен ывăлĕсене çырса пĕлтернĕ. Çĕнĕ çул кунĕнче ăна виçĕ ывăлĕнчен виçĕ телеграммă тата укçа куçарнă квитанцисем пырса панă. Çав çулхине вăл çĕнĕ çул кунне праçник туса ирттерме тытăннă. Ывăлĕсем ăна мухтанă, çĕнĕ çул ячĕпе саламланă, нумай кунçул суннă.

— Ну, старик,—тенĕ савăнăçлă карчăкĕ,—ывăлсем çын шутне тухрĕç вĕт, виççĕн харăс укçа яма пуçларĕç, халĕ вилсен те юрать пулĕ, ĕлĕк хăвах каланăччĕ-çке?

— Çук, карчăк, вилессине тепĕр срока хăварар, унта, леш тĕнчере, туррăн писăрĕсем пирĕнсĕр те аптрамĕç-ха, кунта пирĕн çĕнĕ пурнăç, колхоз тумалла,—тенĕ старик, ăшшăн кулса.

— Кая юлса пынăшăн ятламĕç-и-ха?—тесе хушса хурать карчăкĕ.

— Кулаксене сехĕрлентерме пултарнăскерсем турă писăрĕсене те хăратма пĕлĕпĕр-ха,—тет старик куç хĕссе.

Хумка Михалчă колхоз хуралçи пулса ĕçлет. Колхозниксем калană тăрăх, ун пек тăрăшакан çынсене тупма та хĕн. „Авăн çапнă вăхăтра тырă куписем патне выльăхсем мар, çерçисем те питĕ чеен пытанса çеç пыраççĕ“, теççĕ ун çинчен. Кашни çĕнĕ çул кунĕнчех колхозра вечер пулса иртет, кашниччех чăн малтан примерлă колхозникăн, Хумка Михалчăн ятне асăнаççĕ, нумай çулсем пурăнма сунаççĕ.

Кашни çĕнĕ çул кунĕсенчех Хумка Михалчă ывăлĕсенчен е саламлă телеграммăсем, е çырусем илет. Виççĕшĕ те хăйсен хисеплĕ ашшĕ-амăшне нумай çулсем хушши пурăнма сунаççĕ.

Кăçалхи çул та Хумка Михалчăпа карчăкĕ çĕнĕ çул кунĕнче ывăлĕсенчен саламлă çырусем илнĕ.

„Юратнă атте—анне! Сире эпир, 1940-мĕш çул пуçланнă ятпа, çемьипех сывлăх сунса, хамăрăн телейлĕ çĕршывра нумай та нумай ыр курса пурăнма сĕнетпĕр“, тесе çырнă аслă ывăлĕпе кинĕ Магнитогорск хулинчен.

„Хисеплĕ атте—анне! Çĕнĕ çул ячĕпе сире хĕрӳллĕ салам яратпăр, Сталинла Конституци хĕвелĕ айĕнче мĕн чухлĕ кăмăл килнĕ çавăн чухлĕ пурăнма сунатпăр“, теççĕ Архангельск хулинче ĕçлекен ывăлĕпе кинĕ.

„Тăван атте—анне! Çĕнĕ çул ячĕпе пиртен улăп пек пысăк салам йышăнăр. Колхозлă ялăн пархатарлă пурнăçĕнче нумай та нумай ыр курса пурăнма сунатпăр“, тесе çырнă кĕçĕн ывăлĕпе кинĕ Минск хулинчен.

Хумка Михалчă çырусене тата темиçе хут пăхса тухать, карчăкĕ савăннипе шывланнă куçĕсене питшăлли вĕçĕпе шăлса типĕтет.

— Пире, 70 çула çитнĕскерсене, миçе çула çитиччен усрасшăн-ши?—çемçен сăмах хушать карчăкĕ.

— Сан шутупа миçе çул пурӑнмалла?—куç хĕсе ыйтать старик.

— Эсĕ ху шутупа миçе çул пурӑнасшӑн?

— Хм,—тет Хумка Михалчӑ, —мĕнле калас сана, срок хума, значит, сӑлтав çук, нимĕн те калаймӑн.

— Мĕнле сӑлтав çук, вилĕм вӑл сӑлтава кĕтмест.

— Эх, карчӑк, карчӑк,—тет Хумка Михалчӑ,— çирĕм-çирĕм пилĕк çул каярахри пурнӑçа килсе парсан, мĕнле сӑлтавне лайӑх аса илĕттĕн эсĕ. Халĕ çитменнине курмастпӑр, выççине пĕлместпĕр те мантӑмӑр-им? 70 çулта пулин те, колхозра ĕçлетпĕр, хамӑр валли ытлашшипех тырӑ илетпĕр,—ку пĕрре. Значит ĕçлемелли правӑ та, ĕç те пур. Ватӑласран чĕрне хури чухлĕ те хӑрамалли çук, ĕçлейми пулсан, государство пӑрахмасть, значит, мĕнле калас сана, ну, пирĕн Сталинла Конституци пур. Халĕ вилсе кайсан çара убыткӑ çеç тӑватпӑр. Ну, сӑмахран, паян иксĕмĕр те шӑнкшанк йӑванса кайса вилер-ха. Мĕншĕн вилсе кайнӑ тесе врачсене илсе килмелле, вĕсем хайсен ĕçĕнчен тавӑлаççĕ. Пире масар çине пуштӑпа ӑсатмалла мар, пытарас пулать. Колхозниксен ĕç парахсах шӑтӑк чавма каймалла, тупӑк тумалла, çумалла. Ну хамӑр утса каяс çук, татах колхозниксене чӑрмантарас пулать. Сахалтан та çирĕм ĕçкунĕ çухалма пултарать. Кунпа çеç те мар, çĕнĕ хуралçӑ тупмалла. Халĕ эсĕ пушӑ ларакан çын туп-ха. А халĕ, нипуç, ĕçлетпĕр те ĕçлетпĕр, „харам пыр“ тенине илтмен, илтес те мар.

— Эккей, старик, мĕн калаçать,—тет карчӑкĕ, вӑрттӑн кулса.—„Ачасем ӳссе çитсе çын пулсан, вилсен те юрать“ тенине мантӑн-и?

— Акӑ çаксем мĕн?—тет Хумка Михалчӑ, ывӑлĕсен çырӑвĕсене тытса.—Вĕсем хӑйсемех пурӑнма хушаççĕ, срок параканни пĕри те çук. Текех урӑх нимĕнле срок та хумастӑп, пушӑ мар, колхозра ĕçлемелле. Леш, ĕлĕк калана сӑмахсене пурне те пӑрахаçа кӑлармa решени тӑватӑп.

Хай каланӑ сӑмахсене çирĕплетсе, Хумка Михалчӑ шуралма тытӑнман сарӑ сухалне икĕ айккинелле шӑлса илет.

**Никита Волков.**

# Ӑ С А К Ĕ Ч Ĕ

Куçмана ахалех кутӑн темен пуль. Чӑннипех те кутӑн. Хӑш-пĕрисем ӑна чӑхӑмçӑ Куçма теççĕ. Чӑн та, пĕрре кутӑнлансан ӑна хуть те тем ту, вӑл хӑйĕннех тӑвать. Ман асатте ӑна: Куçма вӑл ман леш турӑ лаша пекех кутӑн, тетчĕ. Вара калама пуçлать:

— Манӑн пĕрре чӑхӑмçӑ лаша пурччĕ. Кĕлте урапи тиерĕм те килетĕп. Пĕрре кӑна пушӑпа хӑмсартӑм, ман лаша уй тункати пек хытса ларчĕ. Ку, мĕн, вӑй çитменнипе туртмасть-ши, тесе çур лавне пушатрӑм. Çук, туртмасть. Татах пушатрӑм, татах туртмасть. Юлашкине, тен кунӑн кĕлтене курсан вӑйĕ пĕтсе лармасть-ши? тесе пĕтĕмĕшпе пушатрӑм. Çук, çавах. Хуть те тем ту. Аппаланнӑ хыççӑн тӑварса пӑрахрӑм. Çавах. Ман лаша япӑх скульптор тунӑ кĕлетке пек чармакланса тӑчĕ те хӑлхисене кӑна вылятать.

Кутӑнлансан Куçма та çавах. Мĕнпе кӑна вӑрçмастчĕ вӑл. Пĕрре утӑ капанĕ хывнӑ чух çилпе те вӑрçрĕ. Вĕрет те вĕрет çил. Куçма тарӑхсах çитрĕ те вӑрӑм йывӑç сенке илсе çӳлелле сиксе çиле чикет тет: Вил, вил, чорт! Тепре тата утӑ çулнӑ чух çавапа çӑмӑра урлӑ-пирлĕ хыпкаланса çулчĕ: Эх шуйттан çӑмӑрĕ! Пĕрре юлми çулса тӑкӑп, чарӑнан-тӑк чарӑн!—кӑшкӑрать хӑй. Çапла кутӑн пиркиех вӑл ачисем çине те çавӑрӑнса пӑхмастчĕ. Унӑн яланхи сӑмахĕ: „Ача-пӑчан ĕçĕ çав“, мĕн пур вĕрентни çавӑччĕ Куçман. Вара, хӑйĕн пӳртне мар, çĕр чӑмӑрĕ полюсĕсене çавӑрса лартсан та шарламастчĕ. Ачисем çинчен мĕн те пулин япӑх енчен каласан:

— Çук, эсир юри кураймасӑр калатӑр. Ача-пӑчан ĕçĕ çав,—тетчĕ.

Ачасем çинчен жалоба пама кашни кун учреждение пынӑ пек пыратчĕç.

— Сирĕн Хветĕр пирĕн кушака вакка янӑ.

— Сирĕн Васлей пирĕн Мишукӑн пиншакĕнчен пĕр тӳмме юлми татса тӑкнӑ...

— Сирĕн Хветĕр манран мӑшкӑлларĕ...

— Сирĕн Хветĕр пирĕн ĕне майракине çапса хуçса пуç тури тӑвакана сутнӑ...

Кутӑн Куçмана ним те мар. Вӑл хаçата урлӑ чĕрсе „качака ури“ чĕркет те:

— Ача-пӑчан ĕçĕ çав. Ман ачасене тиркеме çук. „Отлично“ вĕренеççĕ, тастан та çавӑрнса тухĕç.

— Тастан çавӑрнса тухмалла пĕрре çеç, шкултан вĕренсе тухмасӑрах тухса кайрĕ,—терĕ тарӑхнипе Марине инке.

Çав кунах кутӑн Куçма Хветĕр сумккинчен дневникне кӑларса илчĕ те шкула вĕренекенсен ашшĕ-амӑшĕсен пухӑвне тухса кайрĕ.

Шкулта çӳçĕсене сысна шӑрчĕ пек чӑнкӑ тӑратнӑскер вĕренӳ çинчен калать.

— Акӑ Куçман ачине Хветĕре илĕр. Пит япӑх вĕренчĕ. Хулиган. Халĕ икĕ эрне ĕнтĕ шкултан пĕр çуллӑх кӑларса ятӑмӑр. Ашшĕ патне кайса каласнӑ пулин те, ачине тӳрлетессишĕн ним те тумасть...

— Чим-ха, чим,—терĕ Куçма,—ман ачана кӑларса янӑ-и? Вӑл япӑх вĕренет-и?

— Çапла, икĕ эрне ĕнтĕ кӑларса яни.

— Мĕнле вӑл, акӑ дневникĕ. Çитменне ман пата никам та пыман вĕт.

— Эсĕ ун чух ман пата пытӑн. Манӑн та ача Хветĕр Кузьмин,—терĕ пускил çынни.

— Апла вӑл мана суйнӑ-çке. Хӑйĕн ашшĕ вырӑнне урӑх çын патне кĕртсе янӑ. Хветĕр хӑй, акӑ пирĕн кил, тесе кӑтартрĕ.

Паллӑ пулчĕ. Хветĕрĕн дневник иккĕ пулнӑ, пĕри ашшĕне кӑтартмалли, унта „отлично“ отметкӑсем хӑй лартнӑ. Тепри—шкулти. Учительсене те ашшĕсене те суйнӑ иккен. Икĕ эрне хушши шкула каяп тесе тухса кайса Анаткасси хысĕнче йĕлтĕрпе ярӑнса çӳренĕ.

Тарӑхрĕ Куçма.

— Çук, ку ача-пӑча ĕçĕ мар! Паянтан эпĕ ӑна сӑнасах тӑрӑп,—терĕ.

— Тин Куçма ӑса кĕчĕ. Ахаллĕн ача-пӑчан ĕçĕ çав, тетчĕ,—терĕç кулкаласа пухура.

Кутӑн Куçман анчах мар ун пек пулать. Тепĕр чух Йӑваш Йӑвансен те, Тӳлек Тихӑнсен те çавӑн пек пулать.

**Н. Колюшкин.**

# Чĕре каллĕх лăпланчĕ

Мĕтри ку учрежденине авланнă çулхине ĕçлеме кĕнĕ. Вăл авланни икĕ çул тултарса виççĕмĕшне куçнă. Çак виçĕ çул хушшинче Мĕтри, хăйĕн пĕчĕкçеççĕ питлĕ-куçлă, эреветлĕ-теветлĕ арăмне юрас шутпа, пухусенче те ытлашши калаçман, машинисткăсем йăл! кулса калаçма тытăнсанах сăмаха ответлă ĕç çине пăрса яма тăрăшнă е сăлтав тупса хăй ларакан сĕтел патне васканă. Учрежденинчи арçынсемпе хĕрарăмсем „Мĕтри лăпкă çын", тесе сăмаха пĕтерме юратнă, кил хуçайккисем çынсен арăмĕсем çине ăшшăн пăхма юратакан упăшкисене вăрçнă чух: „Пўтсĕр! Мĕнле намăс мар сана çав Мĕтрирен. Вăл хăй арăмне ылтăнтан та мала хурать, хĕвелтен те хĕрўреххĕн юратать. Ав камран пример илмелле санăн",—тесе хăтăрма юратнă.

Пирĕн Мĕтри чăн та чăн лăпкă та йăваш упăшка ĕнтĕ.

Çак лăпкă чĕреллĕ служащи, заняти пĕтнĕ хыççăн тумтирне тăхăнса киле каяс тенĕ чух, пĕрре хĕрелсе, тепре кăвакарса кайрĕ. Хăй сывăхĕнче никам та çуккине курa, хыçалтан пружинăпа сиктернĕ пек учрежденинчен вирхĕнсе тухрĕ. Çук, пусма тăрăх анмарĕ вăл—чĕлĕм туртмалли пўлĕме кĕрсе питĕрĕнсе ларчĕ.

— Фу! Кам çырнă ку хута?—терĕ вăл чĕтĕрекен аллипе тытнă хут татки çине пăхса.—Паллах, хĕрарăм алли!

Лăпкă Мĕтрин халиччен лăпкă пурăннă чĕри хумханса кайрĕ. Кăкăрĕнче тăвăрланса килнипе чĕркуççи шăнăрĕсем çемçелчĕç, çамки çине шултăра тар сиксе тухрĕ. Вара тытăнчĕ вăл хăй патне çыру çырса, вăрттăн кĕсйене чиксе хăварнă хĕрарăм кам пулма пултарни çинчен шухăшлама. Шухăшласан-шухăшласан унăн ўт-пĕвĕ сăрхăлтатса çўçенсе илчĕ, шывланнă куçĕсем шурă хут татки çине ăшшăн пăхса илчĕç:

— Ах, — терĕ вăл,—кăна машинистка Ася çеç çырма пултарнă. Пăх-ха, „çĕнçул каçхи бал-маскарада манăн хваттере пыр: хăнасем пулаççĕ, кирлĕ мар çынсене ан систер. Маскарада упа тумне тăхăнса кĕр, эпĕ тилĕ пулатăп", тенĕ вĕт. Ну, Ася мар-и-ха ĕнтĕ çак кайăк?!.

Тўсейменнипе вăл шурă хут таткине чуптуса илчĕ. Чуптунă хыççăн аван пек те туйăнчĕ, хăйĕнчен хăй те вăтанчĕ:—Арăм та аван, Ася тата та авантарах. Ну, мĕн тăвас манăн?—ыйтрĕ хăйĕнчен хăй Мĕтри. Ответне кĕтсе илеймесĕрех пўлĕмрен тухса урам тăрăх сăрт çинелле вăрăм утăмсемпе туналарĕ. Халиччен лăпкă пурăннă чĕре мухтанчĕ, кăмăл ирĕк вырăна туртрĕ...

* * *

Çак кунтан пуçласа вара Мĕтри бал-маскарада хатĕрленнĕ. Тир магазинĕнче упа тирне суйласа илнĕ, атă-пушмак магазинĕнче, упа ури евĕрлĕ пултăр тесе, пысăк атă туяннă. Заняти хыççăн йĕлтĕрпе хула хыçне тухса никам кансĕрлемен çĕрте сассине упа пек кăларма репетици тунă. Пĕр эрне хушши çапла аппалансан, унăн сасси чăнах та упа сасси евĕрлех мĕкĕрсе тухма пуçланă.

Отчет çырнă чух-и е юлташĕсемпе калаçнă чух: „Мана Ася бал-маскарада чĕнчĕ, эсĕ ăна пĕлетĕн-и, шĕвĕр?—тесе темиçе хутчен те кăшт çеç çавăрса хуман вăл. Ун пек чух хăйĕнчен хăй хăраса шăлĕсене çыртнă, тутисене пĕр çĕре пăчăртанă.

„Тепле персе ярăн та сăмаха, вара Асяна хăрах куçпа та кураймăн",—тенĕ вăл.

Бал-маскарад пулас умĕн кунĕпех вăл сехет йĕппи çине пăхса ларнă. Тилмĕрсе пăхать те—сехет йĕппи вырăнтан та хускалмасть пек. Хăй сехетне шанмасăр çынсен сехетне пăхса илет—çынсен сехечĕсем те ку кунхине малалла шуман пек туйăннă. Аптăранипе арăмĕнчен ыйтать:—Марфа, паян кăнтăр иртрĕ пулмалла?

— Иртме мар, çитмен те-ха,—тет арăмĕ.

Вара йывăррăн сывласа илет Мĕтри. Унăн чĕри сикет. Куç умĕнче—кăмăллă хĕрĕн сăнĕ, унăн кулам пек туса тăракан çўлти тути, юриех Мĕтри чĕрине çунтарма илемлĕн курăнакан сăмси. Çўçĕ! Ункăн, ункăн çавăрăнса тăракан çўçĕ.

Арăмĕ çине пăхать те—Мĕтрин кăмăлĕ пăтранать, Ася çинчен шухăшлать те—юрату çулăмĕпе çунас килет. Эх, вăхăт, хĕрхенместĕн-çке эсĕ Мĕтрия?

Çитмĕл çичĕ хут тарласа кĕтсе илнĕ вăхăт çитрĕ. Мĕтри упа тирĕпе аттине меллесе çыхрĕ те Канаш урамĕпе тăвалла утрĕ. Çул тăршшĕпех вăл пўлĕме кĕрсен Асяна мĕнле сăмах каламаллине шутласа пычĕ. Пĕр предложени тупать—килĕшмест, тепре тупать—вăл та килĕшмест.

— Фу!—сывласа ячĕ вăл,—ахаль чух сăмах кĕтĕвĕпех, халĕ пĕри те пуçа килмест. Хă, хытнă чĕлхене кам юраттăр!

Çапла мăкăртата-мăкăртата утса хăй ăçта çитсе кĕнине те сисмерĕ вăл. Тен татах малалла каятчĕ пулĕ те, такăнса ўкни пулăшрĕ.

Ларать Мĕтри канав хĕрринче, ўксе ыраттарнă çамкине хыпашлать, сайра-хутран аҫлатса илет. Юр çинче ларакан Мĕтри хăлхине сывăхри пўртре юрлани илтĕнет, ав тата клуб чўречинчен бал-маскарада пухăннă çынсен маскисем курăнаççĕ. Вара Мĕтри текех ларас темерĕ: упа тирĕпе лайăхрах пĕркенчĕ те сиккипех чуптарчĕ.

Акă ĕнтĕ Мĕтри чĕрине çунтаракан хваттер. Акă тинех ĕнтĕ Мĕтрие эрне хушши юрату çатми çинче ăшалантарнă хĕр куç умне килсе тухать! Ерипен, пĕр айăккинчен тепĕр айăккине тайкаланса, хваттере кĕчĕ. Вара тилĕ тирĕпе пĕркеннĕ Асяпа чăм шыва ўкиччен ташларĕ Мĕтри. Ташланăçем чун хавалĕпе пăшăлтатса пырать:

—Асечка! Эпĕ сана хам арăмран та ытларах юрататăп.

Ася тилĕ тирне сирсе пăрахрĕ те... Мĕтрин арăмĕ пулса тăчĕ.

— Асяна-и?—терĕ вăл йўçеккĕн кулса ярса. Манран та хытăрах юрататни? Айван! Ара вăл çырăва эпĕ çырнă вĕт. Эсĕ мана халĕ те хутла пĕлмест тетĕн пуль. Иртнĕ уйăхрах хутла пĕлменнисен каçхи шкулне пĕтернине мантăни мĕн?

— А Ася?..—аран çеç сăмахне хĕссе кăларчĕ Мĕтри.

— Ася вăн лешĕ, летчикла тумланни. Вăл кĕçĕр качча каять.

Тĕлĕнсе кайнă Мĕтри тарăхнипе пĕтĕм вăйне пухса упа сассипе мĕкĕрсе ячĕ. Вара унăн хумханнă чĕри лăпланнăнах туйăнчĕ.

**И. Кашлинке.**

# АРКТИКӐРИ ТӖЛПУЛУ

В. Брискинпа В. Фомичев ӳкерчӗкӗ.
Сӑвви В. Бараевӑн.




Ҫӗнӗ ҫулта хирӗҫ пулнӑ майӑн,
Ҫӗклер, тусӑм, бокал, савӑнар.
Антив ӳсчӗр геройсем нумайӑн,
Пирӗн ӗмӗт пултӑр ҫав кӑна.

Ҫӗклер, тусӑм, чаплӑ геройсемшӗн,
Хамӑр аслӑ ҫулпуҫшӑн ҫӗклер.
Ҫӗклер хамӑр ҫывӑх тӑвансемшӗн,—
Пӗтӗм аслӑ халӑхшӑн ҫӗклер!

# КУЛАС КИЛЕТ

## „Динамо“ колхозӑн улмуҫҫи садӗнче

(Пукӑртан ялӗ, Канаш р.)

Касрӑм, касрӑм пӗрене,
Турӑм лартрӑм шурӑ пӳрт.
Ҫич чӳрече кастартӑм,—
Пӗри тухрӗ хӑйпӑнса.
Хӑйпӑк витӗр пӑхрӑм та:
Пирӗн колхоз садӗнче
Качакасем сиккелеҫ,
Пӗлтӗр лартнӑ йӑвӑҫсен
Хупписене шӗкӗлчеҫ.

Т. Иванов—Таҫук.

## Анат Ачак колхозӗнче

(Совет районӗ)

Мим-мим Микита,
Микитанӑн шӑприне
Йыт ҫӗклесе кайнӑ, тет.
Пирӗн колхоз улӑмне
Уйри итем ҫинченех
Выльӑх ҫисе кайнӑ, тет.

Я. Васильев.

## Суйлав хыҫҫӑн вырӑнтан тухнисен юрри

Ши карӑм, пи карӑм,
Ҫӳле карӑм—пуҫлӑх пултӑм,
Наказсене йӑлтах мантӑм,
Суйлав хыҫҫӑн—персе антӑм.

## Юнашар пӳлӗме

— Ай-ай пирӗн Иванов бюрократланса кайнӑ. Ун патне 1939 ҫулта декабрӗн 31-мӗшӗнче отношени ятӑм. Паян 1940 ҫулхи январӗн 3-мӗш кунӗ. Ответне памарӗ.

— Отношенийӗ ҫитеймен пулӗ.

— Мӗнле ҫитеймен вара. Инҫе мар вӗт, юнашар пӳлӗмрех.

## Чее ашшӗ

Ҫӗнӗ ҫул умӗн елка ӗрешлемелли япаласем сутнӑ ҫӗрте черет пурччӗ. Пурте хӑйсен ачисене савӑнтарма „теттесем“ илсе тавӑрӑнасшӑн. Кӗске ҫын, пӗчӗк чемодан йӑтнӑскер, ыттисене сирсех мала тухасшӑн тӗрмӗшет.

— Граждансем!—терӗ вӑл черетрисене.—Ярӑрха манаǃ Монтер эпӗ. Электричество счетчикне тӗрӗслесе тухам.

— Ыран килӗн.

— Ырана хӑварма юрамасть.

Граждансем ӑна ҫул параҫҫӗ. Мала тухса тӑрсан хайхи ҫын 10 штук шариксем туянать те каялла ҫавӑрӑнса тӑрса, черетри ҫынсене:

— Эпӗ монтер мар,—тет.

## Апатланакансем ыйтнӑран

— Сирӗн столовӑйӗн варринче илемлӗ пальма йывӑҫҫи сарӑлса ӳсетчӗ. Халь ӑҫта вӑл?

— Кӑларса пӑрахрӑмӑр. Апат ҫиме ҫӳрекенсем унтан тусан вӗҫет тесе вӑрҫатчӗҫ.

— Сӗтел ҫиттисем ӑҫта?

— Ӑна та апатланакансем сӳсе пӑрахтарчӗҫ: пинжак ҫаннисене вараласа ярать, тетчӗҫ.

## Асран тухмасть

Уйкас ялсоветӗнчи (Етӗрне р.) вулав ҫуртӗнче ҫамрӑксем картла ҫапаҫҫӗ. Васильев счетовод картузне выляса янӑ.

(Н. Лукин).

Васильев счетовод, вулав ҫуртӗнчен картла выляса таврӑннӑ хыҫҫӑн ҫывӑрмансскер, паян ӗҫе миҫе ҫын кайнине шутласа ларать:—...пиллӗк, улттӑ, ҫиччӗ, саккӑр... тӑххӑрӑн, вуннӑн... (шухӑшӗсем сапаланса кайнипе)... валет... дама, король, туз...

## Тӗлӗкре

Хутма вутӑ илме маннӑ управдом тӗлӗк курса выртать. Ӑна такам вӑратать пек:

— Управдом! Иван Петрович! Хӑвӑртрах пуҫтарӑнса тух! Пирӗн айри этаж ҫуна пуҫланӑ.

— Ҫунать? Апла пулсан кӑштах ӑшӑнса выртас-ха... Шӑнса кайнӑччӗ,—тет тӗлӗкӗнче.

## Докладсемпе калаҫусем пирки

Кӗнекесем туянма уйӑрса панӑ укҫатенкӗрен чылай районсенче 50 процент та усӑ курайман. (Хаҫатсенчен.)

— Библиотекарь юлташ, иртнӗ ҫулта эсӗ мӗнле темӑпа калаҫусем ытларах туса иртернӗ?

— Кӗнеке усӑлли ҫинчен.

— Камсем хушшинче? Колхозниксем хушшинче-и?

— Мар. Ялсовет председателӗпе унӑн заместителӗ хушшинче.

## Мӗншӗн?

Нумаях пулмасть „Капкӑн“ редакцине Наркомздравран телефонпа шӑнкӑртаттарчӗҫ.

— „Чӑваш Коммунӗн“ ҫав-ҫав номерне пӑхса параймӑр-ши?—теҫҫӗ.

— Ара, эсир хӑвӑр ҫырӑнса илместӗр-и мӗн?—терӗмӗр эпир.

— Ҫук,—теҫҫӗ.—Эпир чӑвашлисене ҫырӑнмастпӑр,—теҫҫӗ.

— Мӗншӗн?—терӗмӗр эпир.

Телефон трубки шӑнкӑрт тутарчӗ те урӑх нимӗнле сас-хура та илтӗнмерӗ. Мӗншӗн?

# Пĕр художник семьинче




АМĂШĔ (ачисене): Ан шавлăр, аçуна халтура тума чăрмантаратăр.

# МАРТЫН

Мĕн пулчĕ ку Мартына? Мĕншĕн начар выля пуçларĕ вăл? Сцена çине тухать те шухăша кайнă пек е зрительсем хушшинче такама шыранă пек хытса кайсах пăхса тăрать. Аптранă енне режиссер сцена хыçĕнче ăна чышкă та кăтартса пăхрĕ, пĕр унпа çеç темиçе кун хушши аппаланса ирттерчĕ—çук, пулăшмасть. Пирĕн Мартын çав çавах юпа пек хытса тăрать. Юлашкинчен сценă хыçне пытанса тăрса Мартын ăсталла пăхнине сăнама тытăнтăмăр. Хăрушши нимех те çук темелле: малти ретре, вăл пăхакан çĕрте, унченхи пекех пĕр хĕрлĕ калпак тăхăннă çамрăк хĕрачапа карчăк тата темиçе йĕкĕт ларать.

— Мĕн пулнă сана? — терĕмĕр çакăнтан пĕрре. — Мĕншĕн эсĕ тăм кĕлетке пек хытса тăратăн?

— Пĕлместĕп, — тет Мартын тĕтре карса илнĕ пек шывланарах тăракан куçĕсене пирĕн урлă залăналла тĕллесе.

— Ара, унччен аван вылятттăнччĕ-çке эсĕ?

Мартын хĕрелсе каять те гримсене тасатма тĕкĕр еннелле çаврăнса тăрать. Куртăр-и? Ну мĕн тăвас-ха çак айванпа? Эсĕ унпа йĕркеллĕ калаçасшăн, а вăл пур—сана çурăмне кăтартса тăрать.

Тĕрĕссипе каласан, вăл аван çеç те мар, питĕ лайăх вылятьчĕ. Хăй пирĕн театра килни нумаях пулмасть пулин те, кĕске вăхăтрах Ухтеркке, Фигаро, Хлестаков ролĕсене чылай пысăк маçтăрлăхпа выляса пачĕ. Алă çупнипе пĕтĕм театр кисренсе тăратчĕ.

Ак халĕ те, çĕнĕ çул-ячĕпе организациленĕ гастрольте те, унăн „Вишня садĕнчи"* „Çирĕм икĕ инкеке" — Епиходова вылямала. Мĕн тăвас вăл ялти сценăсем çинче те пĕр вырăна пăхса хытса кайса тăра пуçласан? Театр ятне çĕртет вĕт вара?! Улăштарас тес—вăл роле вылямалли урăх çынни çук (Б. Алексеев чирлĕччĕ ун чухне).

„Атя, мĕн пулать те мĕн килет ĕнтĕ", терĕмĕр те эпир гастроле тухса кайрăмăр. Ара, халь тин кирек мĕнле пăшăрхансан та ĕçе пулăшаяс çук вĕт.

* * *

Вакун майĕпен силленсе шăлтăртатса пырать. Актерсенчен чылайĕшĕ выртнă, хăшпĕрисем рольсем вĕренеççĕ. Хĕрарăмсем вырнаçнă енчен духи шăрши çапать. Чи çÿлти полкă çинче режиссерпа Хĕлĕп-Фирс шахмăтла выляççĕ. Пĕр Мартын—Епиходов çеç вагон чÿречи умне пырса таяннă та, шухăша кайса çил шăхăрнине итлесе пырать.

— Пăх-ха эсĕ ун çине, — çара янаххине полка хĕрринчен кăтартса режиссера айккинчен тĕкет Хĕлĕп-Фирс. — Сăнĕ-пуçĕ чисти философăнни пек вĕт. Çавă „Çирĕм икĕ инкеке" вылять-и? Ĕмĕрне те пулман! Каларĕ тейĕн ак кайран. Хăй вăл „Çирĕм икĕ инкек", театршăн... Курăн ак намăс кăтартать пире.

— Хамăн та чунăм çук, — тет режиссер Хĕлĕпĕн темиçе пешкине аяккалла илсе хурса.

Шăп çав вăхăтра алăк уçăлать те вагона леш театрти пек хĕрлĕ калпак тăхăннă çамрăк хĕр кĕрсе тăрать. Полка хĕрринчен пуçĕсене усса тăракан режиссерпа Хĕлĕп Мартын хăмачă пек хĕрелсе кайнине кураççĕ. Хĕрача вутăш евĕр илĕртÿллĕн кулкаласа ăна алă парать.

— Ну, мĕнле? — тет Мартын темшĕн сасартăк хыпăнса ÿксе. — Шутласа кăлартăн-и? Мая килет-и?

— Пулчĕ, — кĕскен çеç тавăрать хĕрлĕ калпаклă вутăш. — Тупрăм шутласа. Йышăнчĕç. Упакассине çитсен хăвăра та кăтартăп...

— Мартын — „Çирĕм икĕ инкек" хĕре ыталаса чуптуса илет. Унăн сасси кĕтмен çĕртенех çав тĕрлĕ çепĕççĕн те чуна тивмелле янăрама тытăнать.

— Кăвакарчăнăм, чĕкеçĕм, — тет вăл хĕре пĕр вĕçĕмсĕр çупăрлама тытăнса. — Мĕн чухлĕ асапланмарăм пуль эпĕ саншăн, мĕн чухлĕ ырлăх-сывлăх, мĕн чухлĕ вăй-хал сунмарăм пуль сана. Ыйăха çухатрăм, рольсене вылями пултăм... Пĕррехинче килмест пулĕ тесе те шикленме тытăннăччĕ.

— Ухмантей, — тет хĕр Мартына алăк енелле çавăтса. — Эпĕ сан хыççăн таçта кайма та...

Вĕсем тухса кайсан режиссерпа Хĕлĕп-Фирс тĕлĕннипе пайтахчен пĕр-пĕрин çине пăхса пуçĕсене силлесе лараççĕ. Юлашкинчен режиссер шанчăксăрран ахлатса илсе куçĕсене хупать.

— Да, — тет вăл трагедиллĕ сасăпа.—Тинех пĕтрĕмĕр иккен, Хĕлĕп тусăм. Пирĕн „Çирĕм икĕ инкек" юратса пăрахнă...

Хĕлĕп аллине çеç сулать.

* * *

Тепĕр кун каçхине Упакасси клубне çапса хĕснĕ пек халăх тулса ларчĕ. Мартын—„Çирĕм икĕ инкек" пурпĕрех фиаскó (провал) тăвасса пĕлсе, артистсем „Вишня садне" питĕ те сивлеккĕн вылямa тытăнчĕç. Лопахинпа Дуняшăн кĕске калаçăвех тем вăрăммĕш чăсăлнă пек туйăнчĕ. Ситменнине иккĕшĕ те хăйсем пĕрмаях урайнелле пăхса тăраççĕ.

Курма пынă çынсем чарăннă калаçусене тепĕр хут тапратма, ÿсĕркелеме тытăннăччĕ çеç, сцена çине Мартын-Епиходов — „Çирĕм икĕ инкек" чечек çыххи йăтса тухрĕ. Унăн ик-виç сăмахех залăри пĕтĕм картинăна улăштарса хучĕ. Курса ларакансем сасартăк шăпланса сцена çинелле тинкерчĕç. Унтан алă çупнисем, ахăлтатса кулнисем илтĕне пуçларĕç. Мартын пĕтĕм чунтан хавхаланса вылянипе ытти актерсен вăйĕ те сисĕнмеллех ăнăçса кайрĕ...

Пьеса пĕтсен курма пынă çынсем тахçанччен алă çупрĕç, актерсене сцена çине темиçе хут чĕне-чĕне кăларчĕç.

— Тĕлĕнмелле! — терĕ мунчари пек тарланă режиссер Хĕлĕп хыççăн клубран сиксе тухса.— Пьеса кунашкал ăнăçлă кайнине чылайранпа курманччĕ. Мĕн пулчĕ пирĕн „Çирĕм икĕ инкеке", э? Кам улăштарса карĕ ăна?

— Хуллентерех! — режиссера савăнăçлăн асăрхаттарчĕ Хĕлĕп. — Куратни?

Вĕсен çывăхĕнченех Мартынпа хĕрлĕ калпаклă хĕр шăппăн калаçса иртсе карĕç.

---

* Сăмах А. П. Чеховăн „Вишня сачĕ" ятлă комедийĕ çинчен пырать. „Çирĕм икĕ инкек" — комедири Епиходов хушаматлă конторщикăн тăрăхласа чĕнекен ячĕ.

— А-а,— терĕ режиссер.— Акă мĕнрĕ иккен постановкăн кĕтмен çĕртен пулнă ăнаçăвĕ. Пирĕн Мартын юрату савăнăçне туйса илнĕ.

— Вăл çеç те мар,— терĕ Хĕлĕп.— „Çирĕм икĕ инкек“ çав хĕре вилес пек юратса пăрахнă пулнă. Лешĕ, Промакадеминче вĕренекенскер, темĕскер шухăшласа кăларма тытăннă пулнă та, ĕçленĕ вăхăтра пирĕн „Инкек“ çине çаврăнса та пăхасшăн пулман. Халĕ изобретенине Мускавра ырланă тет пулас... Мартынăн пĕр тăруках икĕ савăнăç ĕнтĕ паян...

— Мĕнле иккĕ?

— Пĕрре изобретени, тепре — хĕрĕ. Ыран çырăнма шутлатпăр, тет. Каçпа клубра доклад тата опытсем пулаççĕ, çĕнĕ изобретени пирки... Да, халь ĕнтĕ Мартына кирек мĕнле роль пар — юрату савăнăçĕпе шăратса çеç кăларать.

**Ф. Уяр.**

# КĔСКЕ КАЛАВСЕМ

## Мĕне пĕлтерет

Пĕрре эпĕ Карл Маркс урамĕпе пынă чух хамăр ял çыннине—Каçăр Куçмана тĕлпултăм. Иксĕмĕр те питĕ хĕпĕртерĕмĕр. Савăнăçлăн калаçса аналалла утатпăр.

— Ялти лару-тăру мĕнле?

— Нимĕнлех те мар,- тет Каçăр Куçма, шўт тума юратаканскер.—Ларнă çĕрти—лапарах, тăнă çĕрти—тĕмерех.

Çапла шăкăлтатса калаçса пыраттăмăр, сасартăк Каçăр Куçма пăшалпа персе ўкернĕ пек çĕре персе анчĕ. Çынсем кулса ячĕç. Эпĕ хыпăнса ўксе Куçмана çĕклесе тăратма пуçларăм. Куçма хăрах ури çине аран-аран пускаласа утма тытăнчĕ.

— Çунашкапа çапса ўкерчĕç,—терĕ вăл уксахласа.— Çунашкапа ярăннă чух ачасем хыçалтан пырса çапăнчĕç.

Малалла утатпăр. Пирĕн куç умĕнчех пĕр ватă карчăка çунашкапа пырса çапăнса аялалла вĕçтерсе анса карĕç. Унччен те пулмарĕ, мана пырса тăрăнчĕç. Анчах эпĕ ўкмерĕм, çунашки çине йăванса урапа çурт кĕтессинчен тĕрелентĕм.

— Ку мĕне пĕлтерет?—терĕм эпĕ ачана.

— Çакă-и?—терĕ ача хăюллăн.— Çакă вăл ачасем çунашкапа ярăнасшăннине, пушă вăхăта усăллă ирттересшĕннине, анчах хула Совечĕ ачасен кануне ним вырăнне те хумасăр пире валли каток туса паманнине пĕлтерет.

Чăнах та çапла мар-ши ку?

Авă, мĕн чухлĕ ача ярăнать тўрĕ урамра. Çунашкаллисем те, конькиллисем те пур унта. Урам хушшине, тротуарсене яп яка каток туса хураççĕ вĕсем. Ярăнаççĕ, юрлаççĕ ачасем.

Юрă инçе, инçе кайса илтĕнет. Анчах та Шупашкăр хула Советне илтĕнеймест пулас.

**Е. Шумилов.**

## „Ку пирĕн патри пекех...“

Иртнĕ кану кунĕ манăн пĕр яка тумланнă старикпе виç-тăватă çĕрте те тĕлпулма тўр килчĕ.

Ирхине пасара пытăм. Купăста сутнă çĕрте тем сăлтавпа карчăксем ятлаçма тытăннă. Пĕрне-пĕри кўрентермелли сăмахсем каласах ятлаçаççĕ çаксем.

— Ку пирĕн патри пекех,— терĕ хайхискер ман çумра тăракан яка тумтирлĕ старик.— Пирĕн те рольсем валеçнĕ чухне çапла харкашаççĕ. Хăшпĕр чухне çапăçу патнех пырса тухать...

Эпĕ нимĕн те чĕнмерĕм.

Почта умĕнче икĕ хĕрарăм сывлăшĕсене çавăраймасăр калаçса тăраççĕ. Кашни минутрах „Хĕлĕп Хветăрччă арăмĕ çапла, тет“, „Йăванăн хĕрĕсем качча каяймаççĕ, тет“, „Петĕрпе Марье уйрăласшăн, тет“ евĕрлĕ сăмахсем сирпĕнсе тăраççĕ. Вĕçĕмсĕрех „тет“.

— Ку пирĕн патри пекех,— терĕ каллех таçтан ман çумма çитсе тăнă старик.— Пирĕн хĕрарăмсем хушшинче те час-часах çавнашкал калаçусене илтме пулать. Пĕрне-пĕри кăшлама юратаççĕ.

Эпĕ татах нимĕскер те чĕнмерĕм.

Çўресен-çўресен Автогужтрест столовăйне çитсе кĕтĕмĕр. Пĕрремĕш блюдо, яланхи пекех, макарон шўрпи пырса пачĕç.

— Ку пирĕн патри пекех,— терĕ старик апата пикенсе.— Пирĕн те вара пĕр япалана лартма тытăнчĕç тĕк—вĕçĕмсĕрех çавна лартаççĕ...

Эпĕ текех тўссе лараймарăм.

— Мĕн сирĕн патри пек?— терĕм эпĕ старик еннелле çаврăнса.— Ăçтан эсир? Тата хăвăр кам?

— Эпĕ Чăвашсен Академи театрĕн Чăваш труппи çинчен калаçатăп,— терĕ старик мана хирĕç.— Ара, пĕлтĕрех „Утне çитмен туртине“ лартма тытăннă та, халĕ те пулин çавнах лартаççĕ. Пьесине хурламастăп эпĕ. Пасăр каланисем те тĕрĕсех... Хам эпĕ сцена çинче ĕçлекен рабочи...

**Ф. Гримасов.**

М. Отаров ўкерчĕкĕ. Фото-клише ТАСС.




**Финляндия военщинине Англия çапла „пулăшать“.**

# Ултавлӑ хушаматсем

Тит, ӗлӗк пуп пулнӑскер, ҫӳҫне шакла касса янӑскер, пӳҫне пӗрре сулахай еннелле, тепре сылтӑм еннелле пӑркаласа таврана пӑхса, темскер шыранӑ пек, утса пырать. Тепӗр чухне тата, усӑнса аннӑ пуҫне сасартӑк як йӑтса пӗлӗтелле пӑхса илет. Вӑл яла пырса кӗнӗ ҫӗре хӗвел те анса ларчӗ.

— Да, каҫ пулчӗ,—шухӑшлать хӑй ӑшӗнче Тит. —Хваттер тупас пулать, хырӑм та самаях выҫнӑ. Анчах мӗнле хваттер, кам патне кайса выртас, паллана ҫынсем ҫук вӗт ку ялта манӑн,—шухӑшлать Тит. Унтан татах, унӑн чи кирли ҫинчен шухӑшламалли пурччӗ, анчах хапхана кӗриклетсе хупсан, карта хушӑкӗсем виттӗр йытӑсем хӑрлатса сырӑнса илни пуҫри шухӑша арпаштарса ячӗҫ. Аран хӑмсаркаласа йытӑсенчен уйрӑлса иртсе кайрӗ. Унтан чи кирлӗ шухӑшне тавҫӑрса илчӗ.

— Хваттере хам пек шухӑшлакан ҫын патне кӗрсе выртсан, хӗллехи вӑрӑм ҫӗрте пуплеме самаях аванччӗ. Ун чухне, тен, хӑнана пӑхнӑ пекех пӑхӗҫ. Ача тӗне кӗртсе укҫа тупсан, татах тем пекехчӗ.—Ҫакӑн пек шухӑшпа вӑл ял варне утса ҫитрӗ. Ҫитрӗ те тӑрать, ӑҫталла кайса хваттер ыйтасси ҫинчен шухӑшласа.

Ҫак вӑхӑтра ун умнелле пӑхсаларакан ҫуртра лампа ҫутса ячӗҫ. Вара Тит ҫак ҫурта кӗрсе пӑхас,—терӗ.

— Кам ку вара?—тесе ыйтрӗ правленире ларакан сторож.

— Ют ҫын, ҫула каятӑп та хваттер тупса выртас тетӗп. Ҫӗрле утма шиклӗ,—терӗ Тит.

— Ыйтса пӑх, тӳрӗ ҫынна ма вара ямӗҫ.—Ҫак вӑхӑтра Тит куҫӗсем, пурне те тинкерсе кашни ҫурӑка паллӑ тунӑ пек, пӑхрӗҫ. Унтан куҫне хӗстерсе, ҫамкине картлантарса стена ҫийӗнче колхозниксем кашни уйӑхра мӗн чухлӗ ӗҫкунӗсем ӗҫлесе илнине кӑтартакан списока пӳрнипе тӗллесе вулама пуҫларӗ.

— Христолюбов Иван П., Богомолов П. С., Староверов, Царев В., Попов С. Д. Эх, ак ӑҫта пурнаҫҫӗ манӑн тусӑмсем!—тесе шухӑшласа илчӗ Тит. Унтан тухса та шурӗ тусӗсене шырама.

— Христолюбов Иван ӑҫта пурнать?—тесе ыйтрӗ вӑл урам урлӑ утса каҫакан пӗр хӗрарӑмран.

— Мӗн тума кирлӗ вӑл сана?—терӗ ӑна хирӗҫ хӗрарӑм.

— Кирлӗ, вӑл ман тусӑм пулать.

— Вӑл ман упӑшка, анчах районран килчӗ.

— Мӗнле ӗҫпе-ши?

— Комсомол ӗҫӗпе райкомра пултӑм, тет.

— Комсо-о-омо-ол!—терӗ те Тит утрӗ малалла.

— Богомолов хӑш килте пурӑнать?—ыйтрӗ вӑл пӗр пӳртри ҫынсенчен.

— Ак пирӗнпе юнашар,—терӗҫ ӑна.

— Богомолов килте пур-и?—ыйтрӗ чӳречерен.

— Ҫук, вӑл паҫӑрах тӗне хирӗҫ кружок занятине тухса кайрӗ,—терӗ ҫамрӑк хӗр сасси.

— Богомолов пулмарӗ пуль ку. Богомолов тӗне хирӗҫ... Аташтараҫҫӗ кусем мана,—тесе юнашар килтен ыйтса пӑхрӗ, анчах унтисем те ҫак тӗлех тӗллесе кӑтартрӗҫ те, Титӑн пӑрӑнса утмалла килчӗ унтан.

— Староверов ҫакӑнта пурнать-и, тесе сӑмахланса пырса кӗчӗ вӑл Староверов пурӑннӑ киле. Унтан, сӑхсӑхса, темскер кӗлӗ сӑмахӗсем каласа, мӑкӑртатрӗ. Ҫак хушӑра сӗтел хушшинче шкул ачисем, килти урока вӗренсе лараканскерсем, ахӑлтатса кулса ячӗҫ. Тит, кӑмӑлсӑр пулса, сухалне якатма пуҫларӗ.

— Ара, пирӗн кӗтесре иконсем вырӑнче картинсем ҫакӑнса тӑраҫҫӗ те ҫавна пӑхса сӑхсӑхнинчен кулаҫҫӗ мари,—терӗ килхуҫи арӑмӗ.

— Староверов ҫакӑнта пурнать терӗҫ те, кильте ҫук-им?—терӗ Тит алӑк хӑлӑпӗнчен тытса.

— Клуба репетицине кайнӑ. Интереснӑй спектакль, ӗлӗк епле пупсем халӑха улталаса ашкӑнса пурӑнни ҫинчен лартма хатӗрленетпӗр,—терӗ инке.—Сӑмах пурччӗ-и мӗн?

Тит сӑмаха каласа пӗтериччен тухса та шурӗ.

— Тьфу, суя, ултавлӑ хушаматсем, пӗри те чӑн мар. Калаҫ ӗнтӗ ҫаксемпе шанса... У-у-у, тур ҫырлахах —тесе вӗчӗрхенсе урамалла утса тухрӗ. Ӑна пыл вырӑнне горчица хыпнӑ пекех туйӑнчӗ. Ку ялта хваттерсем кӑмӑла кайман майӗпе, ҫӗрхутах урӑх ялалла тухса танккарӗ.

А. Сорокин.

—— ○○○ ——

## Капкӑн юлташӑм!

Горький хулине, „Союзоргучета", укҫа куҫарма тесе эпӗ декабрӗн 17-мӗшӗнче Ядрино салинчи пуштӑ уйрӑмне пытӑм.

— Паян пуҫ ыратать, ыран кил—терӗ мана пуштӑ уйрӑмӗн начальникӗ Александров М.

18-мӗшӗнче пытӑм.

— Паян пултараймастӑп, укҫа йышӑнмалли квитанци ҫук, ыран кил,—терӗ мана Александров.

19-мӗшӗнче пытӑм.

— Квитанци Етӗрнерен килмен, ыран кил,—терӗ каллех Александров.

20-мӗшӗнче пытӑм—кану кунӗ пулчӗ!

21-мӗшӗнче, 5-мӗш хут пырсан тин, ман укҫана йышӑнса юлчӗҫ.

Малашне кам та пулин Ядрино салинчи пуштӑ уйрӑмӗ урлӑ укҫа куҫарас тесен, малтан Етӗрне хулине кайса квитанци кӗнекине тата Александровӑн пуҫне юсамалли эмел илсе пымалла.

М. Д. Шкурин.

Етӗрне районӗ, „Пионер" колхоз учетчикӗ.

## Хисеплӗ „Капкӑн"

Декабрь уйӑхӗнче ман пата Шӑхасан районӗнчи „Вӑйлӑ тырпулшӑн" хаҫат редакцийӗ ҫакӑн пек ҫыру ҫырса ячӗ:

„Иванов юлташ! „Вӑйлӑ тырпулшӑн" хаҫатра пичетленнӗ заметкӑсемшӗн Сире 4 тенкӗ те 20 пус гонорар укҫи тухать. Ҫавӑнпа та Сире гонорар шутӗнчен 4 т. 20 пуслӑх январь уйӑхӗнчен пуҫласа февраль уйӑхне ҫитиччен тӑватӑ уйӑхлӑх „Вӑйлӑ тырпулшӑн" хаҫат ҫырӑнса паратпӑр".

Ҫуралнӑранпа та эпӗ январьпе февраль уйӑхӗсем хушшинче тата икӗ уйӑх пуррине пӗлменччӗ. Мӗнле ятлӑ-ши вӗсем? „Васкакан ҫынна култарнӑ", „мӗн ҫырнине хӑйсем те пӗлмеҫҫӗ" ятлӑ мар-ши?

Салампа Д. Иванов.

# ЛАШИСЕНЕ ÇУХАТНĂ

Тоак р-чи „Исаково“ колхозра лашасене уйри улăм ури патĕнчех усраççĕ.

Л. Петров.



КОНЮХ: Ăçта кайса кĕнĕ-ши пирĕн лашасем? Кунта юр куписем çеç...

# ПУРТЕ ÇУРМАЛЛА

Петĕрпе Микулай, иккĕш пĕрле пулса, сурăх пусрĕç. Какайне вĕсем „никама та кӳренмелле ан пултăр" тенĕ законпа валеçрĕç. Петĕре сурăх пуçĕ лекрĕ пулсан, Микулай та унсăрăн юлмарĕ. Урăхла каласан, сурăх пуçне вĕсем икĕ хăлха хушшинчен касса уйăрчĕç. Петĕре пĕр кайри ури, тепĕр малти, Микулая та çавăн пекех лекрĕ. Какайне тушкана урлă мар, çурăм шăммисем тăрăх касса уйăрчĕç, çапла вара хӳри те икке пайланчĕ.

Ăш-чиккисене пĕтĕмпех пĕр хурана ярса, икĕ çемье пĕр сĕтел çине ларса çимелле турĕç. Сĕтел хушшине ларсан, Петĕрпе Микулай тата вĕсен арăмĕсем „какайĕ перекетлĕ пултăр" тесе, пĕрер черке ĕçрĕç.

Çакăнта вĕсем таса какай мĕн чула ларни çинчен шутлама тытăнчĕç. Иван шутласа пăхрĕ те— питĕ йӳне ларнă.

— Тир хакне кăлартăн-и?—терĕ Микулай.

— Ба-а, эпĕ ун çинчен мансах кайнă. Мĕн чул хурас ăна?

— Тирĕ пĕчĕккĕ мар, лайăх, 8 тенкĕсем тăратех пуль.

Пурте килĕшеççĕ. Пуринчен ытла Петĕр çав хак çине тăрать.

— А хăшĕ илĕпĕр?—терĕ вăл.

— Хăть эсех ил!—тет ăна Микулай.

— Илме илĕп те, анчах... 8 тенкĕ кăшт хаклăрах пек туйăнать мана. Çиччĕ çинчен юрать пуль,—терĕ вара Петĕр.

— Темĕн,—килĕшсех каймасть Микулай.

Пĕр вăхăта шарламасăр тултармăш çиеççĕ.

— Тирĕ пире те пăсмасть те-ха,—терĕ Микулай арăмĕ, пĕр ывăç тултармĕш тĕпренчĕкĕсене çăварне хыпса.

— Илĕр, эсир илĕр, пурпĕрех!—терĕ вĕсене Петĕр.

— Илес вара,—арăмĕпе килĕшрĕ Микулай.

Петĕр сурăх тирне, сакайĕнчен сĕтĕрсе кăларса, саркаласа пăхать.

— Пĕрте-пĕр шухăшласан 8 тенки те хаклă мар ĕнтĕ,—тет вăл.—Пасарта хаклăрах вăл. Ну пирĕн иксĕмĕрĕн тавлашса тăмалли çук... Тăххăрпа килĕшĕпĕр вара?

Вăл аллинчи шăрпăкне кĕсьине чиксе, Микулайăн çунакан пирусĕ патне хăйĕн сӳннĕ пирусне чĕртме кармашать.

— Юрать-и?—ыйтать вăл Микулайран.

Микулай шарламарĕ.

— Юрать ĕнтĕ çапла,—терĕ татах Петĕр.

— Мана пит кирлех те мар,—терĕ ăна Микулай.—Хăвах илместне?

— Мана кирли кирлĕ ачана кĕрĕк çĕлетсен аван...—Петĕр, сăмахне пĕтермесĕрех, тир тавра утса çаврăнчĕ. Хӳри тĕлне çитсен, кукленсе ларчĕ те вăл:—Пăх-ха кунта, сӳнĕ чухне хӳри тĕлĕнчен шăтарнă. Çакă вăл тир хакне йӳнетет... 6 тенкĕрен хакла тăмасть.

Ĕçе Микулай арăмĕ хутшăнать.

— Пире те кирлĕ вĕт, илес, Микула!—тет вăл упăшкине.

— Ăна та кирлĕ тет вĕт-ха,—тет ăна упăшки.— Çын урлă илме çук.

Петĕр пирус тĕпне çĕре паракать те тир тавра тепĕр хут утса çаврăнать.

— Ахаль, ку шăтăкĕ нимех те мар-ха та, хӳри панче çеç вĕт.—Мур çинĕ, 9 тенкĕ çинчен килĕшес! Сăмах пĕттĕр!—тет вăл юлашкинчен.

Микулай пирус чĕртсе ярать.

— Юрĕ,—тет вăл.—Çиччĕпе те, тăххăрпа та каласма пăрахăпăр. Вăтам хак илĕпĕр те 8 çинчен килĕшĕпĕр. Тирне эсĕ ил, ман ачан кĕрĕкĕ çĕнех-ха.

— Саккăрпа юрамасть,—терĕ ăна Петĕр.

— Мĕн чулпа вара?

Эпĕ пасăрах каларăм: çав ултă çинчен килĕшсен тĕрĕсех килет пуль.

— Апла юрамĕ!—терĕ Микулай.—Саккăр çинчен ăна такам та илет.

Çакăнта государство валли тир илекен килсе кĕчĕ. Петĕр кунта мĕн пулассине часах туйса илчĕ. „Ах, мур,—тесе шухăшларĕ вăл,—хамăнах илмеллеччĕ-ши? Çапла туса хам сутнă пулсан, кĕсъене 4—5 тенкĕ укçа ахалех кĕретчĕ. Çапла, 8 тенкĕ çинчен хамăн илес".

Çак хушăра Микулайпа тир илекен хушшинче килĕшӳ сăмахĕсем вĕçленчĕç.

— Саккăрпа килĕшĕпĕр вара, Микулай!—терĕ вĕсем патне пырса Петĕр.

— Çук ĕнтĕ, государствăна усă пултăр. Тире çак çынна парса ярăпăр,—терĕ Микулай.

Тир илекен сурăх тирне виçсе пăхрĕ те 12 тенкĕ те 38 пус укçа шăлтăрт! кăларса парчĕ, Петĕрĕн куçĕ-пуçĕ алчăраса карĕ.

— Эх, хамăнах илмеллеччĕ те,—терĕ вăл ӳкĕнӳллĕн.

— Саккăрпа килĕшмерĕн вăт,—терĕ ăна Микулай.

— Кам пĕлнĕ вăл килессе!—тесе хутланса илчĕ Петĕр.

Çапла аппаланаççĕ кулленех Упа касси яленчи Петĕрпе Микулай!

**А. Филиппов.**

# Хăшпĕрисене

**(Çĕнĕ çул ячĕпе ыра сунни)**

**Вăрнар райçутпайĕнчисене.** „Хут пĕлменлĕхе пĕтерес" ятлă предметпа иртнĕ çулта илнĕ „плохо" отметкăна юсаса „отлично" илмелле пултăр.

**Шупашкарти Гортоп сыннисене.** Сăмса шăнсан çеç вутă хатĕрлеме тытăнас йăлана пăрахмалла пултăр.

**Шăхасан районĕнчи Ямаш вулав çурчĕн пуçлăхĕ пулса ĕçлекен А. Кириллова.** Кирлĕ кĕнекесем çукки çинчен справкăсем паракан сĕтел пулма пăрахмалла пултăр.

**Тăвай районĕнчи** турăçăрсен ячейкисене.—Ыйăх чăпти çапма манмалла пултăр.

**Сĕнтĕр районĕнчи** Туçи Улкаш ялĕнчи „Мичурин" колхозăн председательне Д. П. Пинарина. Вăрман хатĕрлес плана ытти колхозсем тултарнине кăна мар, эсĕ ертсе пыракан колхоз тултарнине те курмалла пултăр.




СИВ МУЧИ (япăх отметкăна). Сирĕл кунтан, тасал çул çинчен! 1940-мĕш çулта санăн йăху та ан пултăр шкулсенче.

**Секретарь и вып. редактор И. Илларионов. Отв. редакт. В. Я. ЯКОВЛЕВ.**
Сдано в производство 14/I-40 г. Подписано к печати 10/II-40г. Уполномоч. Чувашглавлита № 1228. Заказ № 41.
Формат бум. 58×84¹/₈. Объем 2 п. л. Тираж 6450 экз. Изд. газ. „Чăваш Коммунĕ", г. Чебоксары, тип. № 1 НКМП ЧАССР

Хакĕ 30 пус.




**Белофинсем патĕнче**

— Ой-йой, санăн чĕлхӳ питĕ шурă-çке.
— Хам хĕрлисене хирĕç текех пакăлтатнăран пулинех...